24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941 ОКТЯБРЬ 10 ӐРНЕКУН 239 (5954) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ.

Ялхуҫалăх çулне ăнăҫлăн вĕҫлессишĕн

Республика ялхуҫалăх çулне вĕҫлесе пырать. Колхозсем тĕштирĕсемпе пăрҫа йышши культурăсене уйран пухса кĕртсе пĕтерчĕҫ. Халĕ авăн çапас, кĕлте кĕртес, пахча-çимĕҫсене пухса кĕртес, кĕрхи çĕртме тăвас, техникăллă культурăсене пухса тирпейлес ĕҫсем кĕрӳллĕн пулса пыраҫҫĕ. Чылай районсем çак ĕҫсене те ăнтă вĕҫлесе пыраҫҫĕ. Чкаловски район, сăмахран, кĕлтесене капана хывас ĕҫе пĕтĕмпех пурнăҫа кĕртнĕ, 53 процент ытла авăн çапнă, çĕрулмине кăларса пĕтернĕ. Пĕр сăмахпа каласан, Чкаловски район çураки вăхăтĕнче илнĕ Хĕрлĕ ялава кайĕн аллинчех хăварассишĕн вăй-хала шеллемесĕр кĕрешет.

Республикăри колхозсем сывăх кунсенчех туса пĕтермелли чи пысăк та васкавлă ĕҫсенчен пĕри вăл — **кĕлтесене капана хывса çитересси** пулса тăрать. Çак ĕҫе тивĕçлипе хаклакан Калинински тата Çĕмĕрле районĕсем кĕлтесене капана хывса пĕтерчĕҫ ăнтă. Анчах Куславкка, Йĕпреç тата Канаш районĕсем хĕл сывхарса килнине туймаҫҫĕ пулас-ха. Вĕсем халĕ те кĕлтесене капана хывас ĕҫе питĕ вăрахăн туса пыраҫҫĕ. Çак районсенчи руководительсен асра тытас пулать: уяр çăнталăкăн кашни сехечĕпе тухăçлăн усă курмасан, кĕлтесем уйрах тăрса юлма пултараҫҫĕ, савăнпа вара авăн çапас ĕҫ те тытăнса тăма пултарать. Çакна шута илсе кĕлтесене капана хывас ĕҫре халех пысăк улшăну тăвас пулать.

Ялхуҫалăх ĕҫĕсен пĕтĕм результатне **авăн çапни** татса парать. Авăн çапас ĕҫе мĕн чухлĕ ăнăҫлăн, тирпейлĕн та ăста хăвăрт туса иртереттĕр, ялхуҫалăх ĕҫĕсен итогĕ çавăн чухлĕ лайăхрах та савăнăҫлăрах пулать. Çапла туса çеç государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра тултарма, колхозниксене тыртăл валеҫсе парас ĕҫе ăнăҫлăн туса иртерме пултаратпăр. Çакна шута илеҫҫĕ те ăнтă Чкаловски тата Вăрмар районĕсем. Вĕсем юлашки вăхăтра авăн çапас ĕҫе чылай лайăхлатрĕҫ. Октябрĕн 15-мĕш тĕлне вăл ĕҫе пĕтĕмпех туса пĕтерме шутлаҫҫĕ. Красноармейски, Канаш, Советски районсем вара ку тĕлĕшпе пачах сителĕкĕр ĕçлеҫҫĕ. Парти Обкомĕпе Совнарком кăтартăвĕсене пурнăҫа кĕртес енĕпе вĕсен хăйсен ĕçне тĕпренех лайăхлатмалла пулать, пуринчен малтан ĕçри черетлĕхе пĕтермелле.

ВКП(б) Обкомĕ Красноармейски райкомĕпе унăн секретарĕне Сахалкин юлташа авăн çапас ĕҫе вăйлатма кирли çинчен хытă асăрхаттарнăччĕ. Анчах çак кăтартăва Красноармейски райком халĕ те тивĕçлипе пурнăҫа кĕртсе пыраймасть-ха.

Çĕр шăнма тытăнать, сивĕ кунсем час та часах пулаҫҫĕ. **Çĕрулми кăларас тата ăна государствăна парас** ĕç умне хăрушлăх тухса тăрать. Çĕрулмине çеç те мар, пĕтĕм пахча-çимĕҫсене пуҫтарса кĕрес ĕҫе халĕ нихăçанхи пек мар вăйлатмалла. Çак ĕҫре Комсомольски тата Елчĕк районĕсем сителĕкĕр хăвăртлăхсемпе ĕçлеҫҫĕ теме пулать. Вĕсем çĕрулмине пĕтĕмпех пуҫтарса кĕртнĕ ĕнтĕ, ăна государствăна парас тĕлĕшпе çеç вĕсен вăйлăрах ĕçлемелле.

Кунта вара Улатăрпа Йĕпреç районĕсем çинчен уйрăмăнах чарăнса тăрас пулать. Çак районсенче условисем ытти районсенчи пекех пулнă те, вĕсем ялхуҫалăхĕнчи пур ĕçсенче те чи юлашки вырăнсене йышăнаҫҫĕ. Çакă вăл унти ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсемшĕн çĕнĕ хыпар мар. Красильниковпа Кужиков юлташсем хăйсен районĕсем чылайранпа юлса пыннине пушшех те лайăхрах пĕлеҫҫĕ. Анчах, ăна пĕлсе тăраҫҫĕ пулин те, тивĕçлĕ выводсем тумаҫҫĕ. Мирлĕ вăхăтра пулнă, халĕ те тытăнса юлнă лăпкăлăха вĕсен халех пĕтерес пулать. Ĕçе вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек урăхлатса çĕнетме тахçанах вăхăт ĕнтĕ.

Колхозсен анлă уйпирĕсем кăçал тухăçлă тырпул ӳстерсе пачĕç. Çав тырпула ăнăҫлăн пухса кĕресси пуринчен малтан хамăртан килет. Парти организацийĕсем, советсем мĕн чухлĕ лайăхрах та конкретлăрах ертсе пырĕç, колхозсенчи ялхуҫалăх ĕçĕсем çавăн чухлĕ ăнăҫлăрах вĕçленĕç. Паллах, кунта тытти ĕçсене те манса хăварма юрамасть. Уйрăмăн илсен, халĕ **вăрлăхлăх хăварнă курăксене** пухса кĕрес ĕç сителĕкĕр пулса пырать, **йĕтĕн-кантăрсене** пултарма хутассишĕн васкаманни сисĕнет, **силос хывмалли** тата **кĕрхи çĕртме** тумалли плана та чылай районсем тултарман-ха. Çак мĕнпур ĕçсене пуса ситересен кăна эпир ялхуҫалăх çулне ăнăҫлăн вĕçлерĕмĕр тесе халама пултаратпăр.

Халĕ колхозсенче Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту сарăлса пырать. Колхозниксем тухăçлăн тата пысăк хăвăртлăхпа ĕçлеме шутлса обязательствăсем илеҫҫĕ. Вĕсен уяв умĕнхи производствăллă çĕкленĕвне ялхуҫалăх ĕçĕсен комплексне хăвăрт туса ситерес, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăҫа кĕртес енĕпе вăйлатса пырас пулать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 8-мĕшĕнчи каҫхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 8-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç пĕтĕм фронтра çапăҫусем туса пынă, Вязьма, Брянск тата Мелитополь енĕсенче уйрăмăнах хаяр çапăҫусем пулнă. Хаяр çапăҫусем хыççăн пирĕн войскăсем Орел хулинчен тухса кайнă.

Октябрĕн 6-мĕшĕнче сывлăшпи çапăҫусенче противникăнне 19 самолет персе антарнă. Пирĕн 12 самолет пĕтнĕ.

Октябрĕн 7-мĕшĕнче Мускав патĕнче тата, туллимар даннăйсем тăрăх, октябрĕн 8-мĕшĕнче нимĕҫсен 6 самолетне персе антарнă.

* * *

Пирĕн штурмовой тата бомбăсем пăрахакан авиаци группи Ленинград патне пымалли çулсем çинче противникăн мотоколоннине ăнăҫлăн атакăланă. Çак операцире нимĕҫсен пехота тата боеприпассем тиесе пыракан 47 автомашинине, çар снаряженийĕ тиенĕ чугунçул эшелонне тата зенитнăй артиллерин пилĕк точкине пĕтерсе тăкнă. Мотоколоннăна хӳтлесе пыракан тăшман самолечĕсене хирĕç пуçланса кайнă сывлăшри çапăҫура «Мессершмитт-109» йышши икĕ самолета персе антарнă.

* * *

Фронтăн Кăнтăр-Хĕвеланăç енче пирĕн авиаци фашистла войскăсен наступленине хирĕç çапăнă чух противник пĕр кун хушшинче 81 танк, пехотăпа боеприпассем тиенĕ 180 автомашина, 4 оруди, бензин тултарнă 4 автоцистерна тата мотоциклсем нумай çухатнă.

* * *

Фронтăн Хĕвеланăç енчи участокĕсенчен пĕринче наступлени туса пыракан противника хирĕç кĕрешнĕ чухне пирĕн пехотăн пĕр чăçĕ, нимĕҫсен атакисене сире-сире ярса, противника пысăк çухатусем кӳнĕ. Хаяр çапăҫура фашистсен 38 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фронтăн Кăнтăр-Хĕвеланăç енче оккупациленĕ районсенчен пĕринче М. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ кĕрешет. Железнодорожниксем отрядра тĕп чăмăр пулса тăраҫҫĕ. Нумаях та пулмасть, разведка отряд командирне поселокран инҫех мар вырăнта нимĕç чăçĕн штабĕ тата фашистсен 80 салтакĕ тăни çинчен пĕлтернĕ. Партизансем виçĕ звенона уйăрăлнă та, çĕрле поселока йĕри-тавра хупăрласа илсе, часовойсене шăпăн вĕлерсе пĕтернĕ тата штаб çурчĕпе радиотелефон станцийĕ çине ручной гранатăсем ывăтнă. Нимĕҫсен комендантĕ автомобиль çинче пытанса юлма хăтланнă, анчах партизансем машинăна взрыв туса аркатнă. Салтаксем тарса пĕтнĕ, 15 çын вилсе юлнă.

Тепĕр кунне партизансем вăрманти çула картласа, нимĕҫсен танковăй колоннине малалла кайма чарса лартнă. Сентябрь уйăхĕн вĕçĕнче партизансем нимĕç танкисĕсен группи çине пырса тапăннă, вĕсем командир машинин моторĕ çĕмĕрĕлнĕ пирки вăрманта чарăнса тăнă пулнă. Пĕр-пĕрин çине хирĕçхирĕç пенĕ чухне 9 фашиста вĕлернĕ. Пĕр уйăх хушшинче М. юлташ отрядĕнчи боецсем нимĕҫсен 90 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, 18 грузовик, 3 çăмăл автомашина тата 6 мотоцикл пĕтерсе тăкнă, 11 кĕпере çунтарса янă тата сӳтсе тăкнă, противникăнне телефон сыхăнăвне темиçе вуншар хут пăснă.

* * *

Нимĕҫсен фашистла мерзавецĕсем хăйсем тытса илнĕ районсенчи халăха тискер-кайăкла вĕлерсе пĕтереҫҫĕ, хĕрарăмсене те, ачасене те шеллемеҫҫĕ. Ленинград облаçĕнчи Луга хулинче фашистсем Николай Леонтьев ятлă 13 çулти ачана тискерĕн асаплантарнă, нимĕҫсем унăн аслă пиччĕшĕ ăçта пурăнни çинчен ыйтса пĕлесшĕн пулнă. Ачанне халхине каснă, сылтăм аллин пӳрисене касса татнă, анчах та вăл палачсем паракан ыйтусене хирĕç нимĕнле ответ та паман. Совет ачи хăйне хăй хăюллăн тытни фашистла ирсĕрсене уртарса янă. Темиçе сехет хушши асаплантарнă хыççăн гитлеровецсем çирĕп героя Николай Леонтьева штыксемпе чиксе вĕлернĕ. Луга хулинче вуншар çынна асаплантарнă тата персе вĕлернĕ.

Ленсоветăн Каменкăра пулнă кану çуртĕнче нимĕҫсем офицерсем валли притон уçнă. «Объединение» артелĕн колхозникĕсене притон валли 6 хĕр уйăрса пама хушнă. Хăйсене мĕнле инкек кĕтни çинчен пĕлнĕ хыççăн хĕрсем пурте вăрмана тарса пытаннă. Яла пырса кĕнĕ фашистсем пĕр хĕрарăм та тупайман. Çакăн хыççăн нимĕҫсем 5 колхозника ярса тытнă та вĕсене персе вĕлернĕ, ялне çунтарса янă.

* * *

Иваново облаçĕнчи рабочисем, колхозниксем тата интеллигенци фронт заказĕсене пурнăҫа кĕртсе, хăйсен вăйĕсене шеллемесĕр тăрăшса ĕçлеҫҫĕ. Мартăн 8-мĕш ячĕпе тăракан фабрика коллективĕ виççĕмĕш квартала планран иртерсе миллион метр ытла пиравăр панă. Шуйскри пĕрлешӳллĕ мануфактурăн 1-мĕш №-лĕ фабрики программăран иртерсе 540 пин метр ытла мануфактура туса кăларнă. Вичугскри «Красный Профинтерн» фабрикăри мастер помощникĕн Жалдин юлташăн бригади тăхăр уйăхри программăна пĕр уйăх малтан тултарса çитернĕ тата сĕршыв валли планран иртерсе 28 пин метр пиравăр панă. Вязниковскри «Парижская Коммуна» фабрикăри крутильщицăсем Шаховăпа Куприянова юлташсем уйăх планне 150 процент тултарнă. Ивановăри çĕнĕ мануфактура фабричи стахановкăсем Кузнецова, Почкина тата Михеева юлташсем 6 станок вырăнне 10-шар станокпа ĕçлеҫҫĕ, плана 115—120 процент тултарса пыраҫҫĕ. Дзержинский ячĕпе тăракан фабрикăри банкаброшница Курнаева юлташ 132 йăкне вырăнне 312 йăкепе ĕçлет, нормăна 220 процент тултарса пырать.

Фабрикăсемпе заводсен директорĕсем патне изобретенисемпе рационализаторла сĕнӳсем çĕршĕрĕн пырса тăраҫҫĕ. Ф. Зиновьев рабочи ячĕпе тăракан фабрика коллективĕн изобретателĕсем вăрçă вăхăтĕнче 48 сĕнӳ панă. 35 сĕнĕве пурнăҫа кĕртнипе фабрика 295 пин тенкĕлĕх перекетленĕ. Ивановăри химико-технологически институтăн профессорĕ Постников юлташ тата ассистент Макаров юлташ производствăллă процеса чылай хăвăртлатакан тата продукци пахалăхне лайăхлатакан çĕнĕ химикат сĕннĕ. Облаçри заводсенчен пĕринче ĕçлекен слесарь Кудряков юлташ токарнăй станока урăхлатса çĕнетнипе ĕç тухăçлăхне 24 хут ӳстернĕ.

Иваново облаçĕнчи нумай пин колхозниксем ĕçри героизмăн тĕслĕхĕсене кăтартаҫҫĕ. Суздальски районри Туртынск артелĕн колхозникĕсем Андреевăпа Филатова юлташсем çĕрулми кăларнă çĕртре икшер норма тултарса ĕçлеҫҫĕ. Кадыйски районри «Путь к свету» артель колхозникĕсем Степаненко, Ставская, Дударева тата Куликова юлташсем кашни хунах виçшер норма тултараҫҫĕ.

Октябрĕн 9-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 9-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç пĕтĕм фронтра çапăҫусем туса пынă, Вязьма, Брянск тата Мелитополь енĕсенче уйрăмăнах вăйлă çапăҫусем пулса иртнĕ.

* * *

Фронтăн Хĕвеланăç енчи чылай участокĕсенче наступлени тăвакан нимĕç фашисчĕсен войскисене хирĕç пирĕн çăссем хаярран çапăҫаççĕ. Германи командованийĕ пирĕн позицисене хирĕç дивизи хыççăн дивизи ярать. Фашистла войскăсене хирĕç вăйлăн та тимлĕн çапăҫса, пирĕн чăссем противника чылай сухатусем кӳреççĕ. Çапăҫусенчен пĕринче пирĕн самолетсен группи, çĕр çинчи хамăрăн войскăсене пулăшса пырса, нимĕҫсен 15 танкне тата пехота ларса пыракан 30 автомашинине пĕтерсе тăкнă, вĕсем пирĕн войскăсем тăнă вырăна кĕрсе кайма хăтланнă пулнă.

* * *

Фронтăн Кăнтăр-Хĕвеланăç енчи участокĕсенчен пĕринче противникăн атакисене чарса, пирĕн чăссем нимĕҫсен фашистла войскисене чылай сухатусем кӳнĕ. Противникăн наступленине хирĕç çапăҫса, пирĕн самолетсен пĕр группи нимĕҫсен моторизованнăй пысăк колонни çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахса тата пулеметсенчен персе, фашистсен пехоти ларса пыракан 50 автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Темиçе бомба тĕл ӳкнĕ те наступлени тăвакан нимĕҫсен мотоколонни каҫма хăтланнă кĕпере çĕмĕрнĕ.

* * *

Ленинград патне пымалли вырăнсене хӳтлесе тăракан пирĕн авиаци октябрĕн 6—7-мĕшсенче противникăн войскисем çине вăйлăн пыра-пыра тапăннă. Пирĕн самолетсен уйрăм групписем нимĕҫсен 6 танкне, 3 бронемашинине, 72 автомашинине, 18 зенитнăй орудине тата артиллерин 2 батарейине пĕтерсе тăкнă, горючи тултарнă темиçе цистернине взрыв туса аркатнă. Ленинград фрончĕн тепĕр секторĕнче пирĕн бомбардировщиксен группи нимĕç войскисем çине сасартăк пырса тапăнса нимĕҫсен 10 танкне, 30 автомашинине, 3 орудине, 30 зенитнăй автоматне, пулеметсен батарейине тата фашистсен пехотине пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Л. хули таврашĕнче фашистла захватчиксене хирĕç С. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ çапăҫать. Партизансем çак кунсенче юханшыв урлă каҫмалли кĕпере çĕмĕрсе тăкнă. Çав кĕпере нимĕҫсем юсаса лартнă, анчах партизансем ăна каллех çĕмĕрсе тăкнă, çавăн чухне нимĕҫсен 12 салтакне вĕлерсе пĕтернĕ, вĕсен 4 автоматне тата ручной пулеметчĕсене тытса илнĕ. Пĕр районри çулсем çинче кĕске вăхăт хушшинчех отряд фашистсен 42 автомашинине тата боеприпассемпе продовольстви тиенĕ 23 лавне, горючи тултарнă 3 цистернине тата 6 мотоциклне пĕтерсе тăкнă. Çак операцисем вăхăтĕнче тăшманăн 28 салтакне тата пĕр офицерне вĕлернĕ, юсавлă икĕ мотоциклне, 3 пулеметне, 10 автоматне, гранатăсем тултарнă 15 ещĕкне тата патронсене нумай тытса илнĕ.

* * *

Нимĕҫсем тытса илнĕ Смоленск облаçĕнчи районсенчен тарса тухнă совет работникĕсемпе колхозниксен группи гитлерла ирсĕрсен çĕнĕрен туса пыракан тискер ĕçĕсем çинчен каласа панă. Обручное, Дегти, Цибульки, Козловщина, Ленно ялĕсенче нимĕҫсем мĕнпур продовольствие, вырăх-чĕрлĕхе, ăшă тумтирсене, çăма, спичкăсене, супăне, керосина, махоркăна тата чугунпа металлран тунă мĕнпур савăт-сапасене туртса илнĕ. Фашистла мародерсем Аким Корольков колхозникăнне 6 пăт туртакан сыснине туртса илнĕ те ушкăн... икĕ марка тӳленĕ. Çаратма çăмăлрах пултăр тесе, Рославльре нимĕҫсен çар влаçĕсем унта пурăнакансене хăйсен хваттерĕсене питĕрсе сӳреме чарнă.

Колковичи ялĕнче нимĕҫсем яла юлнă çынсене хăваласа пухнă та телефон пралукĕсене татăкансене тупса пама хушнă. Нимĕҫсем темĕн тĕрлĕ хăратнисене пăхмасăрах, совет патриочĕсем нимĕҫсене пĕр сăмах та каласа паман. Çавăн хыççăн фашистсем халăх хушшинчен 12 арçына, çав шутрах çитĕнсе çитмĕн темиçе çамрăка, чĕнсе кăларнă та, вĕсене çырмана илсе кайса персе вĕлернĕ. Пречистенск районĕнчи Рожаново ялĕнче фашистсем Евсей Жигунов колхозника тата 70 çулти Аким Спиридонова персе вĕлернĕ. Макаровск тата Гороватск ялсовечĕсене кĕрекен ялсенчи пĕтĕм халăха фашистсем ирĕксĕр ĕçлеттерме илсе кайнă та вĕсен мĕнпур çурт-йĕрĕсене çунтарса янă.

* * *

Нимĕç фашисчĕсем поляк халăхне тискер майсемпе пĕтерсе пыраҫҫĕ. Юлашки вăхăтра кăна Гитлер бандичĕсем Польшăра пиншер çынна персе вĕлернĕ. 60 пин çынна тĕрмесене тата концентрацилле лагерьсене тытса хупнă. 540 пин ытла рабочие нимĕҫсен предприятийĕсенче ирĕксĕрех ĕçлеттерме вăйпах Германие илсе кайнă, тыткăнра ураракан 640 пин поляк çак шута кĕмест. Нимĕҫсем поляксенчен пур майсемпе те мăшкăлламаҫҫĕ. Пур поляксен çаннисем çине те «П» саспалли çырнă, ятларласа хатĕрленĕ повязка сыхса янă. Нимĕç влаçĕсем поляксен мĕнпур харпăрлăхне конфискацилеҫҫĕ. Поляксен нимĕнле право та çук. Поляксен интеллигенцине тата священниксене фашистсем çул-йĕр строительствинче тата рудниксенче ĕçлеме янă.

ПУРНЕ ТЕ ÇАР ĔÇНЕ ВĔРЕНТЕССИ

Коммунистсем çар ĕçне вĕреннĕ çĕрте

ÇĔРПУ. Ĕççыннисем çар ĕçне тимлĕн вĕренме тытăнчĕç. Ку ĕçре уйрăмăнах коммунистсемпе комсомолецсем малта пыраҫҫĕ.

Кăшаркассинчи вĕренӳ пунктĕнче комиссар пулса коммунист Герасимов юлташ ĕçлет. Унăн заместителĕ Громов юлташ та коммунист. Вĕсем малтанхи кунах вĕренӳ пунктĕнче коммунистсемпе комсомолецсене пухса çар ĕçне вĕреннĕ çĕрте малти ретре пымалли, дисциплинăллă пулмалли çинчен каласа панă.

Коммунистсемпе комсомолецсем хăйсене малтанхи кунсенчех палăртма пуçларĕç. Вĕсем дисциплинăна Хĕрлĕ Çар ретĕнчи пек çирĕплĕн пăхăнса пыраҫҫĕ, тăрăшса вĕренеççĕ. Сăмахран, Тимофеев, Яковлев, Никифоров юлташсем стройра, гранатăпа винтовка çăçĕсене вĕреннĕ çĕрте, ПВХО занятийĕсенче т. ыт. çĕрте те чи малта пыраҫҫĕ.

Коммунист Никоноров юлташ çапла калать:

— Çар ĕçне вĕренни халăхи вăхăтра кирлĕрен те кирлĕ ĕç пулса тăрать. Юнĕçсен фашизма хăвăртрах çапса аркатма эпир, ССР Союзĕн граждăнĕсем, çар ĕçне тăрăшса вĕренме тивĕç.

Никоноров юлташ çар техникине алла çăвăрса илессишĕн çине тăрса вĕренет.

Вĕренӳ пунктĕнчи коммунистсемпе комсомолецсем, çар ĕçне тăрăшса вĕреннипе пĕрлех, общественниллă ĕçсене те активлăн хутшăнаҫҫĕ. Подразделенисенче хаçат-журналсем вулаҫҫĕ, стена хаçачĕсем кăлараҫҫĕ тата агитаци ĕçне туса пыраҫҫĕ.

Коммунистсемпе комсомолецсем çар ĕçне тимлĕн вĕренсе пӳр енĕпе те хатĕрленсе çитнĕ боецсем шутлма тăрăшаҫҫĕ.

В. ФАДЕЕВ,
ВКП(б) райкомĕн çарĕç отдел заведующийĕ.

Отлично вĕренессишĕн ăмăртаççĕ

КУСЛАВККА. Алла хĕçпăшал тытса çапăçма пултаракан граждăнсем пурте çар ĕçне вĕренме тытăнчĕç. Вĕренӳн малтанхи кунĕсенчех ĕççыннисем çар ĕçне вĕренес çĕрте хăйсем дисциплинăллă пулнине кăтартрĕç, вĕсем занятисене пĕр минута кая юлмасăр пухăнаççĕ.

Малтанхи кунсенче политработниксем вĕренекенсене Оборонăн Государственный Комитечĕ йышăннă постановлени çинчен, Сталин юлташ радио тăрăх тухса калани çинчен ăнлантарса пачĕç, вĕренӳ программипе паллаштарнă.

Ĕççыннисен çар ĕçне вĕренес хастарлăхĕ питĕ те пысăк. Пăрмас ялĕнчи пунктра вĕренекенсем, çар ĕçне отлично вĕренсе пыма пулса, пĕр-пĕрин хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ячĕç, вĕсем Карачри пунктра вĕренекенсене хăйсем пекех отлично вĕреннĕ чĕнчĕç. Çăвăн пекех, районри ытти подразделенисенче те социализмлă ăмăрту сарăлсах пырать.

Стена хаçачĕсем кăларма редакторсемпе редколлеги членĕсем, политикăллă-массăллă ĕçсем туса пыма—агитаторсемпе политчтецсем уйăрнă. Вĕсем ĕçе тытăнчĕç те ĕнтĕ. Пăрмасра, Карачра, Тĕрлемесре тата Аманкре вĕренекенсем стена хаçачĕсене пĕрер номер кăларнă. Аманкре вĕренекен боецсем кашни кунах пĕрле пухăнса радио тăрăх паракан хыпарсене итлеҫҫĕ.

Çар ĕçне вĕренме кирлĕ хатĕрсем: винтовкăсем, гранатăсем, противогазсем т. ыт. те сителĕклĕ хатĕрленĕ, учебниксемпе литература та сителĕклĕ.

Çăвăн пекех, рабочисемпе служащисем производствăран уйăрăлмасăр вĕренеççĕ, вĕсем валли комбинатра тепĕр пункт уçнă. **С. МИШУТКИН.**

Дисциплинăпа организацилĕх кирлĕ

Заняти паян та, яланхи пекех, каçхине шăп 7 сехетре пуçланчĕ. Пĕрремĕш сехет — строевой заняти, иккĕмĕш — дисциплинарнăй устав. Командирсем подразделенисене кашни харпăрăй вырăнне илсе кайрĕç.

Отделени стройра тăрать.

— Паян пирĕн винтовкăна хулпуççи çине хума тата каялла ура çумне антарма вĕренмелле,—тет отделени командирĕ Семенов юлташ. Винтовкăна мĕнле тыткаламаллине малтан командир хăй кăтартса пачĕ. Боецсем пурте ун çине тимлĕн пăхаççĕ, унтан вĕсем хăйсем, командир кăтартнă пек, вĕренме тытăнчĕç.

— Винтовкăна кăшт сӳлерех çĕклемелле, пурин те пĕр тан пулмалла, командăна тимлĕн итлĕр, пĕр харăс тăвăр,—вĕрентет командир. Вăл кашни боецăн тĕплĕн сăнать, йăнăшсене çийĕнчех тӳрлетме пулăшать.

Пĕр сехет иртни сисĕнмест те. Перерыв, унтан каллех заняти.

Иккĕмĕш заняти шӳлĕмре пулса иртрĕ. Иккĕмĕш сехетре боецсем Хĕрлĕ Çăран дисциплинарнăй уставĕпе паллапăрĕç.

— Совет çăрăн дисциплини—вăл Хĕрлĕ Çарти правилăсене пĕлни тата вĕсене çирĕп пăхăнса тăни пулса тăрать. Пирĕн çăран дисциплини вăл совет правительствин законĕсем тата çар уставĕсем çинче никĕсленнĕ,—тесе ăнлантарать взвод командирĕ.

Боецсем Хĕрлĕ Çăран дисциплинарнăй уставĕпе пирвайхи кунсенчех паллашнă, халĕ вĕсем мĕн вĕреннине халлех тепĕр хут аса илеççĕ. Командир боецсенчен ыйтма тытăнчĕ.

Кашни боец, яшт сиксе тăрса, командир паракан ыйтусем çине кĕскен, ăнланмалла тата уççăн ответлет. Дисциплинăллă пуласси устава çирĕп пăхăннинчен килет. Устава пăсас мар тесен, ăна тĕплĕн пĕлмелле.

Çар ĕçне вĕренме сӳрекенсен йышĕнче тĕрлĕ çулхи тата тĕрлĕ профессиллĕ çынсем пур. Анчах вĕсен пурин те пĕр ĕмĕт—Оборонăн Государственный Комитечĕ кăтартса панă 110 сехетлĕ программăра пăхса хунисене пĕтĕмпех тĕплĕн ăнăхса, алла пăшал тытса тăван çĕршыва ирсĕр фашизмран хӳтлесе хăварма вĕренесе ситес ĕмĕт.

* * *

Шупашкар хулинчи военнообязанăйсен çар ĕçне вĕренес хастарлăхĕ пысăк. Вĕсем малтанхи кунран пуçласах хăйсене дисциплинăллă тыткалама тăрăшаҫҫĕ, çар ĕçне вĕрентессине чăнлăхпах кирлĕ пек организацилессе кĕтеççĕ.

Программăра пăхса хунă 110 сехетлĕ кашни минутлăхне тĕплĕн усă курмалла тăвас пулать. Анчах вĕренĕвĕн малтанхи кунĕсем ху ĕçре ситменлĕхсем пуррине те кăтартса пачĕç. Вăл ситменлĕхсенчен çаксене палăртса хăварма пулать: подразделенисене малтанхи кунах йĕркеллĕ тата тĕрĕс туса ситермен пирки, çынсене вырăнтан-вырăна куçарасси халĕ те пур-ха, хăшпĕр кĕçĕн командирсем занятисене кирлĕ пек хатĕрленсе пымаççĕ, тепĕр чухне пĕр вырăнта тăрса вăхăт усăсăр иртет, политикăллă ĕçсене те сителĕклĕ организацилемен. Çаксене кĕске вăхăтрах пĕтермелле. **М. М-в.**

Обязательствăсене татрĕç

КАНАШ. Малта пыракан колхозсем государствăна ялхуҫалăх продукчĕсем тăратас тĕлĕшпе те кăтартуллăн ĕçлеҫҫĕ. Октябрĕн 1-мĕш тĕлне Сухайкасси, Мăкăр колхозĕсем государствăна тĕштырă, çĕрулми тата хăяр парса татрĕç. Мăкăр колхозĕ çĕрулми типĕтес ĕçе районра чи малтан организацилерĕ. «Динамо», «3-я Пятилетка» колхозсем те çĕрулми парса татрĕç.

ДЕЙСТВУЮЩИ ХĔРЛĔ ЯЛАВЛА БАЛТИКА ФЛОЧĔ. Боевой задани илнĕ хыççăн Совет Союз Геройĕн П. А. Бринько юлташăн самолечĕ тăшмана çĕмĕрме сывлăша вĕçсе çĕкленет.

А. МЕЖУЕВ фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Америкăри ĕçлев федерацин с'ездне Рузвельт янă послани

НЬЮ-ИОРК, октябрĕн 8-мĕш. (ТАСС). Енер Америкăри ĕçлев федерацин (АФТ) пулсерен пулса иртекен 61-мĕш съездĕ уçăлнă. Федерацин исполнительнăй комитечĕн съезда тăратнă отчĕтĕнче Гитлерăн чăн-чăн тĕллевне — Гитлер Европăри мĕнпур çĕршывсене хăйне пăхăнтарма хăпсăннине, çапла майпа вара пур çĕрте те гитлерла режим туса хума ĕмĕтленнине кăтартса панă. Нимĕçсем пусмăрласа илнĕ мĕнпур çĕршывсенче тата Гитлер çарĕсем контроль туса тăракан çĕршывсенче демократиллĕ ирĕклĕ профсоюзсене пĕтерсе тăкнă. Нимĕç çарĕ правительствăсене контроль туса тăнă çĕршывсенче пур çĕрте те ирĕклĕхе пĕтерсе хунă. Диктатор Гитлер тата унăн тăрăшăсем хăйсен ĕçĕсене ытти халăхсене хураймасăр туса пыраççĕ. Вĕсем вак халăхсене асаплантарса, хĕссе тата пĕтерсе пыни историн страницисем сине гитлеровецсем тунă чи тискер те нимĕн тӳрре кăларайми актăсем пулса кĕрсе юлаççĕ.

Федерацин исполнительнăй комитечĕ съезда Америка обороний программишĕн, Атлантикăпе унăн союзникĕсене пур енĕпе те туллин пулăшу парса пырас политикăшăн тăма сĕнет. Рузвельт çак съезда послани янă, çав посланире вăл производствăна вăйлатма тата нацистла варварствăна пĕтерсе тăкас задачăна çăмăллатас шутпа профсоюзсен пĕрлĕхне тума чĕнет. Гитлеризм,—тесе çырать Рузвельт, — рабочисене кăна мар хăратса тăрать, — чăн та рабочисем ку хăрушлăх умĕнче пĕрремĕш ретре тăраççĕ, — вăл çавăн пекех гитлеризмран сиен курма пултаракан ытти çынсене те хăратса тăрать. Гитлеризм пире пурне те — ирĕклĕхе шанакан арçынсене, хĕрарăмсемпе ачасене хăрушлăх кӳрет. Эпир американецсем тата ирĕклĕ çынсем пулса тăрса мĕне пĕтĕм чĕререн юратса атаканта-ратпăр, çавсене пурне те гитлеризм хăрушлăх кӳрет. Çавăнпа та Америка халăхĕ, хамăран ирĕклĕхсене шикама та, нихăçан та тӳртса илме парас мар тесе, хăйĕн вăйĕ çитнĕ таран пурне те тума тупа турĕ. Пирĕн хамăран мĕнпур вăйпа ăсхакăла çав ирĕклĕхсене хӳтлес ĕçе памалла. Пирĕн оборона программин, пирĕн карапсем, самолетсем, орудисем, танксем тăвас ĕç мĕн май килнĕ таранах анлă пулмалла, çак ĕçĕн виçи пĕр фактора кăна пăхăнмалла, — çакă вăл нацистла ордасене çĕнтерме кирлĕ таран хĕпăтал парасси.

«Нью-Йорк таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри ĕçлев федерацийĕн представителĕ, съездра тухса каласа, Америкăри ĕçлев федерацийĕ Рузвельт программишĕн тăни çинчен пĕлтернĕ, çавăн пекех тата «тинĕссенче сӳремелли ирĕклĕхе сыхласа хăварассишĕн, мĕнпур тĕнчери демократие хӳтлессишĕн татăклăрах ĕçсем тума кирли тухса тăрас пулсан» правительствăна пулăшу пама сăмах панă.

Финлянди сеймĕнчи пысăк хирĕçӳсем

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 8-мĕш. (ТАСС). Финляндири «Уусн», «Соуми» тата «Хувудстадсбладет» хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Финляндин халĕ пулса иртекен сеймĕнче пуçланса кайнă тăвăллă тавлашусем Финляндире пуçпула тăракан çынсем хушшинче пысăк хирĕçӳсем пурри çинчен каласа парааççĕ. Финляндин правительĕсем сеймăн оппозициллĕ депутачĕсен Вийк ертсе пыракан группине, правительствăн Гитлер майлă политикине тăрăшыв çине кăларнăскерне, арестленипе хамăр хушăран «оппозицие кăкласа кăвăртăмăрах» тесе шутланă. Анчах та пренисем пуçланса кайсанах, сейм трибуни çинчен правительство адресĕпе тарăхуллă сăмахсем илтĕнĕ. Хăшпĕр депутатсем правительствăн тулашри тата шалти политикине хыттăн критикленĕ. «Шведсен халăх партийĕн» депутачĕ профессор Фурухельм пысăк сăмах тухса каланă. «Хувудстадсбладет» хаçат сăмахĕсем тăрăх, Фурухельм çапла каланă: «Сеймăн шведсен фракцийĕ — юлашки вăхăтри событисем çинчен сейма çителĕклĕ таран пĕлтерсе тăман, тесе халама кирлĕ тесе шутлать. Сеймăн ĕçĕсем пĕр уйăх пынине пăхмасăрах, Финляндин тулашри тата шалти лару-тăрăнăç çинчен отчет илеймен. Демократиллĕ государство йĕрки тата сейм пĕтĕм халăх умĕнче ответлă пулса тăни енчен пăхсан, — тенĕ Фурухельм, — ĕç сăкнашкал тăни питех те çителĕксĕр тата шиклентерет». Фурухельм тата ун кыççăн тухса каланă «Шведсен халăх партийĕн» депутачĕ Эстланд правительствăран çитес вăхăтра хăйĕн ĕçĕсем çинчен отчет туса пама кирлĕ.

Коалициллĕ партин депутачĕ Хурттă правительствăна вăл продуктсем хакланса кайнине тата çĕршывра продовольстви тĕлĕнчен лару-тăру япăхса çитнине хирĕç витĕмлĕ мерăсем йышăнманнишĕн критикленĕ. Социал-демократла депутат Пелтонен государство служащийĕсен ĕç укçине 30 процента çитиччен ӳстерме кирлĕ. Аграрăлă партин пренире туха каланă депутачĕ Нюкканен бюджет тăвăнсене пешкăсем тесе ят панă тата правительствăна çĕнĕ налогсем хурас кирлĕ çине ответсăр пăхнăшăн айăпланă. Депутат социал-демократ Лехтокоски правительство халăх сывлăхне сыхлас ĕç валли укçа уйăрса парассине ӳстерме кирлĕ. Лехтокоски çапла калтарта панă: правительство граждăнла халăх хушшинче вилекенсем пысăккăн ӳссе кайнă вăхăтра халăх сывлăхне сыхлас ĕç валли средствăсем парассине пĕтерсе лартрĕ, тенĕ.

Германи информаци бюровĕ шухăшласа кăларнă çĕнĕ ирсĕр элек

ТЕГЕРАН, октябрĕн 8-мĕш. (ТАСС). Германи информаци бюровĕ, юлашки кунсенче, Германин дипломатиллĕ миссин составне Иранран тухса кайнă чухне тĕрлĕ майсемпе хĕсĕрленĕ тесе калакан пĕлтерӳсем вăйлăн сарса пынă. Геббельс ведомствинчи опытлă вĕшлейыт-сыравçăсем, дипломатиллĕ çынсене никам пырса тĕкĕнмелле мар йĕркене пăсас тĕллепне кимĕçсен меслечĕсене лайăх пĕлсе тăраканскерсем, хăйсен ялăнхи йăлисене Совет Союзĕн Иранри представителĕсем сумне краскăсене хĕрхенмесĕрех сăрласа çыпăçтарма пăхаççĕ. Анчах та вĕсем хăйсен ултавлăх тăрă шыв çине кăларакан пăшăр обстоятельствăсене шута илсе пĕтереймен. Германи миссийĕ Иранран çак çĕршывпа çыхăну тытакан государствăсене нумай тĕрлĕ представителĕсен куçĕ умĕнче тухса кайнă. Германи дипломатиллĕ миссийĕн сотрудникĕсене хĕсĕрленĕ тесе нимĕç пропаганди нăхăçан пулман ирсĕр элек шухăшласа кăларнă пирки ытти çĕршывсен дипломатиллĕ представителĕсем тĕлĕнеççĕ те тарăхаççĕ.

Чăннипе Германи миссийĕн составне Иранпа Турци чикки урлă хăйсен мĕнпур дипломатиллĕ документĕсемпе тата личнăй багажĕсемпе касарса янă,— вĕсен багажĕсене те ун чухне тĕрĕслемен. Пуринпĕн те паллă, Германи миссийĕ тухса кайнипе пĕр вăхăтрах Иранран Итали миссийĕн сотрудникĕсем те тухса кайнă, вĕсене Японин Тегеранри представителĕ ăсатса янă.

Тĕнĕл держависен миссийĕсен Иранран тухса каякан сотрудникĕсене никам ӳпкелешмелле мар пăхнă. Итали миссийĕн членĕсене совет çар влаçĕсем вапаватлăн ăсатса янишĕн Итали посланникĕ совет комиссарне Турцин чикĕри офицерĕсем умĕнче, итальянецсене ăсатма пынă Японин Иранри дипломатиллĕ миссийĕн представителĕ умĕнче тавтăнă. Маку хулинче Итали посланникĕ совет войскисен командованийĕнчен миссие сыхласа пымашкăн красноармеецсене уйăрса памалăхне ĕçлеççĕ те тарăхаççĕ.

Германи империалисчĕсен Польшăна çĕнĕрен пăрахăçлăхĕ

Германи империалисчĕсем Польшăна çĕнĕрен пăрахăçлăхĕ çинчен çĕнĕ ĕмĕтленнине курăнса тăрать.

Çапăçусен пуçарулăхĕ Ленинград фронтĕнче пирĕн аласене куçсах пырать.

Хушăксем пулса тăнисене питĕрес тĕлĕшпе фашистла чаçсене фронтăн пĕр участокĕнчен тепринче ытла та хăвăртăн куçарнисем палăраççĕ. Нимĕçсен пĕр дивизинне вак группăсене уйăрса, группăсем вĕсем пĕр-пĕринчен уйăрăм тăрса çапăçни палла пулса тăнă.

Пирĕн фронтăн Кăнтăр-Хĕвелтухăç секторĕнче вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Çак участокра Т. юханшывĕн сыранĕнче нимĕçсем хăйсем валли усăллă позицисем йышăнса илме пултарнă пулнă. Вĕсем командний высотара йывăçсем йăвантарса тата çĕр купаласа укрепленисем туса, участока пур енчен те—фронтран та, флангран та персе тăракан огневой точкăсем вырнаçтарса тухнă. Çакна пăхмасăрах, Н-ски чаçăн пехота подразделенийĕ танксемпе тата авиацине пĕрлесе çапăçнине тата Балтика флочĕн артиллерийĕ пулăшса пынине юханшыв патне çĕмĕрсе кĕрсе кайнă, противникăн нумай огневой точкисене путарса лартнă та лайăх рубежра сирĕпленсе ларнă.

Противникăн кунсерен тăвакан хаяр контратакисене, ăна нумай çухатусем кӳрсе, кашнинчех сире-сире янă. Çак пĕчĕк çеç, анчах чи кирлĕ участокра пĕр кун хушшинче кăна нимĕçсен икĕ пин çынна çити вилнĕ. Хĕрлĕ Çăран чаçĕсем çĕнĕрен малалла шуни çинчен кашни кунах хыпар килсе тăрать.

Хула таврашĕнчи вăйлă çапăçусенче пирĕн боецсен наступлени хăвачĕ туптанса пырать. Нимĕçсен Ленинград фронтĕнче çапăçакан войскисен материаллă ресурсĕсем пĕтсе пынă вăхăтра Хĕрлĕ Çăран техникăллă вăйă ӳсех пырать. Хулан оборона промышленноçĕ фронта валли мĕн кирлине пурне те парса тăрать.

Тăшман халлĕхе вăйлă-ха, хăрушлăх пысăк, анчах хулана хӳтлекенсем çĕнтерӳ хатĕрлеççĕ.

Генерал-майор **В. А. КРЫЛОВ.**

Ленинград, октябрĕн 8-мĕш. (ТАСС).

Ленинград патĕнче

10—12 кун хăйрах тытăкăна илнисем фашистла офицерсем хăйсен салтакĕсене Ленинград патĕнче çăмăл çăнтерӳсем сĕнни çинчен, илемлĕ хулен пуянлăхĕсемпе илĕртни çинчен тата тутă та ӳсĕр пурнăç пама шантарни çинчен каласа параççĕ. Ку кăна мар ха, «СС» дивизийĕсен пĕрин штурмовикĕсем тылран килсе çитнĕ те, хула патĕнче çапăçусем пынине пĕлсен, кăмăлсăрланса тĕлĕнсе кайнă. Вĕсене Ленинграда илнĕ, «йĕркелĕх тăвасси» кăна, урăхла каласан, çаратмалли кăна юлнă, тесе пĕлтернĕ пулнă. Юлашки кунсенче тытăкăна илнисем пĕтĕмпех урăхла каласа параççĕ. Офицерсем хулана тытса илни салтаксене ниме те кирлĕ мар, тесе ăнлантарса параççĕ иккен.

«Шухăш-кăмăлĕсене» çавтери ăнсăртран улăштарни нимĕçсем Ленинград фронтĕнче вăхăтлăха çитĕнӳсем тунă хыççăн хăйсене татăклăнах пырса çапнинчен килет. Юлашки 8—10 кун хушшинче нимĕçсем хула патне пĕр утăм та малалла шăвайман. Вĕсем наступленилле çапăçусем туса пыма хăтланнисем пурте яланах арканса каяççĕ. Нимĕçсем Ленинград таврашĕнче питех те чылай çухатусем тӳснĕ. Суйласа илнĕ «СС» дивизийĕ тата пехотăн 121-мĕшпе 122-мĕш дивизийĕсем вăтам шутпа хăйсен чĕрĕ вăйĕнчен 45—50 процент çухатнă. Çак дивизисен тытăкăна лекнĕ пĕр санитарĕ кăтартса панă тăрăх, унăн ротинче сентябрĕн 17-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 1-мĕшне çитиччен 75 çын çухалнă.

Нимĕçсем вооружени техники тĕлĕшпе те калама çук пысăк çухатусем тӳсеççĕ. Нимĕçсен хула патĕнче çапăçакан дивизийĕсенче вăтам шутпа артиллери 40 процентне пĕтерсе тăкнă. Противникăн танкĕсем çухални уйрăмах пысăк.

Хĕл сывхарни нимĕç салтакне хăратать. Вăл урине те, сине те начар тăхăннă, хĕллехи условисене хăнăхман. Нимĕç салтакĕсен нумайĕшĕн шинелĕсем çук. Тытăкăна лекнисем кăтартса панă тăрăх, салтаксем хăйсене сменăпа улăштарасси, канасси тата вăрçă пĕтесси çинчен ĕмĕтленни курăнса тăрать.

Çапăçусен пуçарулăхĕ Ленинград фронтĕнче пирĕн аласене куçсах пырать.

Хушăксем пулса тăнисене питĕрес тĕлĕшпе фашистла чаçсене фронтăн пĕр участокĕнчен тепринче ытла та хăвăртăн куçарнисем палăраççĕ. Нимĕçсен пĕр дивизинне вак группăсене уйăрса, группăсем вĕсем пĕр-пĕринчен уйрăм тăрса çапăçни палла пулса тăнă.

Пирĕн фронтăн Кăнтăр-Хĕвелтухăç секторĕнче вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Çак участокра Т. юханшывĕн сыранĕнче нимĕçсем хăйсем валли усăллă позицисем йышăнса илме пултарнă пулнă. Вĕсем командний высотара йывăçсем йăвантарса тата çĕр купаласа укрепленисем туса, участока пур енчен те—фронтран та, флангран та персе тăракан огневой точкăсем вырнаçтарса тухнă. Çакна пăхмасăрах, Н-ски чаçăн пехота подразделенийĕ танксемпе тата авиацине пĕрлесе çапăçнине тата Балтика флочĕн артиллерийĕ пулăшса пынине юханшыв патне çĕмĕрсе кĕрсе кайнă, противникăн нумай огневой точкисене путарса лартнă та лайăх рубежра сирĕпленсе ларнă.

Противникăн кунсерен тăвакан хаяр контратакисене, ăна нумай çухатусем кӳрсе, кашнинчех сире-сире янă. Çак пĕчĕк çеç, анчах чи кирлĕ участокра пĕр кун хушшинче кăна нимĕçсен икĕ пин çынна çити вилнĕ. Хĕрлĕ Çăран чаçĕсем çĕнĕрен малалла шуни çинчен кашни кунах хыпар килсе тăрать.

Хула таврашĕнчи вăйлă çапăçусенче пирĕн боецсен наступлени хăвачĕ туптанса пырать. Нимĕçсен Ленинград фронтĕнче çапăçакан войскисен материаллă ресурсĕсем пĕтсе пынă вăхăтра Хĕрлĕ Çăран техникăллă вăйă ӳсех пырать. Хулан оборона промышленноçĕ фронта валли мĕн кирлине пурне те парса тăрать.

Тăшман халлĕхе вăйлă-ха, хăрушлăх пысăк, анчах хулана хӳтлекенсем çĕнтерӳ хатĕрлеççĕ.

Генерал-майор **В. А. КРЫЛОВ.**

Ленинград, октябрĕн 8-мĕш. (ТАСС).

Пĕтĕм вăя—тăшмана аркатса тăкма

ХАРЬКОВ, октябрĕн 8-мĕш. (ТАСС). Харьковри Н-ски заводра мĕнпур цехсемпе отделсен коллективĕсен митингĕ пулса иртнĕ. Заводăн машинăсен корпусĕн трибуни çинчен туса калаканскем пурте Октябрь уявĕ умĕнчи социализмлă ăмăрту çинчен тата тăшмана çĕмĕрсе тăкма вăйсене мобилизацилесси çинчен калаканă.

Кадрти рабочи-слесарь, инструменталщик Якубов çапла каланă:

— Манăн ывăл фронтра. Унран уйăраласси маншăн çăмăл пулмарĕ; анчах манăн, унăн ашшĕн, наказĕ çапла пулчĕ: ултавлă та вăйлă тăшманран тăван çĕршыва хӳтленĕ чух хăвăн пурнăçна шеллемелле мар. Эпĕ ватă тата пĕр çул кăна мар пенси илсе тăратăп пулсан та, хамăн завода тавăрăнтăм, фронта кайнă ывăлăма улăштартăм.

Кун хыççăн 5-мĕш номерлĕ цехăн мастерĕ Ананьев, завод инженерĕ Либерман тата ытти те туса калаканă.

Писательсем Ванда Василевская тата Александр Корнейчук митингра хĕрӳллĕ сăмахсем тухса каланă. Фашизма хирĕç пыракан вилемле кĕрешӳри совет çыннисен патриотизмĕ çинчен каласа, вĕсем заводри рабочисемпе работницăсене, инженерсемпе техниксене çĕршывăн оборонине ырми-канми çирĕплетсе пыма, мĕнпур вăйсемпе пĕлӳсене парса, фронта пулăшас ĕçе вăйлатма хĕрӳллĕн чĕнĕç.

Англи авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 8-мĕш. Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: иртнĕ çĕрле Германи авиацийĕ Англи çине килсе çĕнĕрен пысăк мар активлăх кăтартнă. Противникăн темиçе самолечĕ Кăнтăр-Хĕвеланăç Англипе Кăнтăр Уэльс çине пырса тухнă.

Вăтаçĕр тинĕс бассейнĕнче Англи авиацийĕ противникăн супу-илӳ тумалли тăватă пароходран тата вĕсене хӳтлесе пыракан 5 эсминецран тăракан судăйсен каравалĕ çине ăнăçлăн пырса тапăннă. Бомбăсем пăрахнă хыççăн пĕр судно тайăлса кайнă, теприн шыва путма тытăннă. Виççĕмĕш судăн мал енчи пайне шăтарнă пулас. Караван командисем хушшинче паника пуçланса кайнă. Тăваттăмĕш судно малалла кайма чарăннă.

Англин йывăр бомбардировщикĕсем Триполи гаванĕ çине, çавăн пекех тата Италин аэродромĕсемпе гидросамолечĕсен базисем çине пырса тапăннă.

Октябрĕн 5-мĕшпе 6-мĕш хушшинчи çĕрле Англи авиацийĕ Бенгази портне вăйлă атакăсем туса иртнĕ. Бомбардировщиксен ытти соединенийĕсем Бардие, Бенинăна тата Баркăна атакăланă. (ТАСС).

Çĕрулми типĕтнĕ

ИШЛЕЙ. Пахча-çимĕç типĕтес тĕлĕшпе кашни колхозрах уйрăм колхозниксем ĕçлеççĕ, вĕсене пурне те кĕске сроклă курссем витĕр вĕрентсе кăларнă. Хăймалакасси ялсоветĕнчи «Аврора» колхоз 40 килограмм çĕрулми типĕтсе государствăна панă.

Г. РАЗУМОВ.

Фашистла „Ĕç хартийĕ“

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 8-мĕш. Скандинавири телеграф бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, Виши правительстви «Ĕç хартийĕ» текенскере йышăннă, çав «харти» тăрăх, çĕршывăн пĕтĕм хуçалăхне фашистла Италири пек корпоративлă йĕркесем тăрăх организацилеççĕ. «Харти» рабочисен забастовкисене татăклăнах чарса лартать. Государство ĕçĕсĕрисене пособисем парса тăрассинчен пĕтĕмпех хăтăлать. (ТАСС).

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли— ăшă туммтирсем

Комсомолецсем пример кăтартаççĕ

ÇЕРПУ. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтир пухас тĕлĕшпе колхозри комсомол организацисем тăрăшса ĕçлеççĕ. Хăйсен примерĕпе ку пысăк ĕçе союзра тăман çамрăксемпе колхозниксене те явăçтараççĕ.

Акă, «Ĕмĕт» колхозра 12 комсомолец. Вĕсем 5 тир, 5 мăшăр çăм перчатка, 3 сăмса тутри тата 100 штука çăмарта пуçтарнă.

«Серп» колхозри 8 комсомолец 2 килограмм çăм, 3 метр çурă пир, 3 алшăлли, 3 мăшăр алшăш, 2 мăшăр носки, 83 штука çăмарта пухнă.

Рындинăри «Новая жизнь» колхозри комсомолецсенчен тăваттăшĕ ăшă тумтир пухас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссире тăраççĕ. Вĕсем 30 тир, 30 мăшăр носки, 30 мăшăр çăм перчатка тата пĕр мăшăр çăматă пухса панă.

«Цивильстрой» колхозри комсомолецсем те ăшă тумтир пухас тĕлĕшпе начар мар ĕçлеççĕ. Организацинче 10 комсомолец. Шорин, Арсентьев, Федорова комсомолецсем комисси членĕсем пулса ĕçлеççĕ. Виççĕшĕ вĕсем 2 мăшăр çăм носки, 2 мăшăр перчатка, 2 килограмм çăм, пĕр мăшăр портянка панă. Колхозĕпе вĕсем 20 мăшăр çăматăлăх çăм тата 20 мăшăр носки пухнă.

Комсомол организацийĕ пуçарнипе пуçтарăннă çăмран носкисемпе перчаткăсем сыхассине йĕркеленĕ. Колхозри хĕрарăмсем пухăнса икĕ каç хушшинче 6 мăшăр носки тата пĕр мăшăр перчатка сыхнă.

«Пучах» колхозри 8 комсомолец 8 тир, 3 мăшăр алшăш, пĕр мăшăр носки, пĕр алшăлли тата 3 килограмм çăм панă.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе учрежденисенчи комсомол организацисем колхозрисенчен начартарах ĕçленине палăртмалла. Малашне учрежденисемпе шкулсенчи комсомол организацисен те ку ĕçе тивĕçлипе туса пымалла.

Е. В.

• • •

Первомайски районри «Восход» колхозри колхозниксемпе колхозницăсем, паттăр Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухса парас ĕçе пурте пĕр кăмăлпа йышăнчĕç. Паянхи куна колхоз хăйĕн фондĕнчен 10 мăшăр çăматă, колхозниксем 30 сурăх тирĕ, 25 мăшăр алшăш, 10 мăшăр носки панă. Волков, Груздев, Долгов колхозниксем пĕрер мăшăр çăматă пачĕç, колхоз председателĕ Александр Шайманов пĕр кĕрĕк пиншаклăх тирсем пачĕ. Л. М. Каганович ячĕпе тăракан колхоз 80 тир панă.

Первомайски районри комисси колхозсенчен тата колхозниксемпе служащисенчен 1196 сурăх тирĕ, 735 килограмм çăм, 398 мăшăр алшăш, 171 мăшăр носки, 120 ăшă çĕлĕк, 57 мăшăр çăматă, 10 заткăллă брюки, 6 кĕрĕк пиншак, 335 мăшăр пир тăла, 247 алшăлли тата ытти те пухнă.

Районра ăшă тумтирсем пухас ĕç малалла та сарăлсах пырать.

Районри комисси Баишеври «Искра» промартеле 600 сурăх тирĕ тума пачĕ.

Я. ЛУКИН.

Комсомолецсен икэрнелĕхĕ

Часах акă хĕл сывхарать. Ялти комсомолецсен умне вылăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленес, çамрăк вылăхсене лайăх кĕтсе илес задача туса тăрать.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн решенийĕ тăрăх, колхозсем вылăхсене хĕл каçарма мĕнле хатĕрленсе ситнине тĕрĕслес тĕлĕшпе октябрĕн 3-мĕшпе 17-мĕш хушшинче икэрнелĕх туса иртермелле. Комсомол организацийĕсен колхозсене тĕрĕсленипе пĕрлех вĕсене ĕçре пулăшас тĕллевпе лартмалла.

Чи малтанах халь колхозсенче тума пуçланă витесене туса пĕтерес, киле витесемпе картасене юсас, шăтăк-çурăксене шитĕрес, йĕри-тавра купаласа çăвăрăнас, кантăксене лартас, кормушкăсем тăвас, витесене дезинфекцилес ĕçсене турнăçлама васкамалла.

Вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри тепĕр пысăк ыйту—çителĕклĕ таран апат-çимĕç хатĕрлесе хăварасси пулать. Сĕтеклĕ апатăн усси пурне те паллă. Çавăнпа та ВЛКСМ Чăваш Обком бюровĕн решенийĕ тăрăх кăçал силос хывас тĕлĕшпе икĕ вунăкунлăх туса ирттернĕ. Вăл хушăра республикипе 30 пин тонна силос хывса хăварнă. Ку тĕлĕшпе Вăрмар, Чкаловски, Шупашкар районĕсем аван ĕçлерĕç. Анчах ВЛКСМ Шăхасан, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпӳ райкомĕсем силос хывас ĕçе çителĕклĕ таран организацилеймерĕç.

Колхозри обществăллă вылăх-чĕрлĕх валли улăм, утă тавраш, тырă хĕл каçмалăх çителĕклĕ хăварнине хăварманнине тĕрĕслемелле, унтан ситменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе правлени умне ыйту лартса ĕçе вĕçне çитермелле.

Тепĕр чухне апатне çителĕклех уйăрса хăвараççĕ, анчах тирпейсăр çитернĕ тата усăсăр тăккаласа пĕтернĕ пирки, çуркунне енне кайсан вылăх апачĕ ситмест. Çавăнпа кĕркуннеренех тĕрĕслӳ ĕçне çирĕп лартмалла. Улăм, утă апатсене вирçе, актпа памалла. Хĕллехи кунсенче вылăхсене апат памалли рационсене туса хатĕрлемелле. Сулçă пухассине йĕркелемелле. Ку ĕçре инженерсемпе шкул ачисем пысăк пулăшу пама пултараççĕ.

Унсăр пуçне комсомол организацисем фермăсенче ĕçлеме хастарлă колхозсене тупса парса правление пулăшма тивĕçлĕ. Фермăсенче ĕçлеме тăрăшакан комсомолецсемпе комсомолкăсене уйăрмалла.

Вылăхсене хĕл каçарма кăтартуллă хатĕрленессишĕн кашни çамрăкăн тăрăшас пулать. Тĕрĕслӳ ĕçне комсомолецсемпе пĕрле мĕнпур союзра тăман çамрăксене хутшăнтарса, колхоз правленийĕсене ĕçпе пулăшмалла.

А. КУЗНЕЦОВА.

ВЛКСМ Обкомĕн хресчен çамрăкĕсен отделĕн заведующийĕ.

Колхоза пулăшрĕç

ТĂВАЙ. Тăрмăш шкулĕнче вĕренекенсем те колхозсене пулăшаççĕ. Нумай пулмасть, вĕсем Лачкасси ялне кайса 25 гектар çуртырри вырса патчĕç.

Унсăр пуçне вĕренекенсем пĕр центнер ытла тимĕр-тăмăр пухнă. Халĕ шăлан çырли, катăркаç хуписем пухассине ĕçлеççĕ. Вĕсене ĕçре учительсем ертсе пыраççĕ.

А. ИВАНОВ.

КИНО

„Çĕнтерӳ пирĕн алăра пулать“

Экран çине çĕнĕ фильм—«Çĕнтерӳ пирĕн алăра пулать!» ятлă киносборник тухрĕ. Ку сборникре пысăк уйрăмлăхсем пур. Кинофильм пĕтĕм çĕршыв асра тытакан «Веселые ребята» фильмри марш кĕввипе пуçланать. Анчах халь вăл сăвă урăхла янăрать. Сталинла преми лауреачĕ Любовь Орлова артистка каллех пирĕн умра. Вăл халĕ те, «Волга-Волга» картинăри пекех, мухтавлă та савăнăçлă почтальон, хăйĕн çĕнĕ сăвăллă юррине «Веселые ребята» кĕввипе юрлать, ялсем тăрăх çӳресе çырусем салатать. Анчах хăнăхса çитнĕ юрă семми сĕнĕлле, хаярран та çилĕллĕн илтĕнет.

На наш народ трудовой и веселый
Напала черных злодеев орда.
И встали грудью деревни и села.
И поднялися большие города.

Стрелкăн (Любовь Орлова ролĕ) велосипечĕ çинчи багажра, отечественнăй аслă вăрçă фронтĕнчен янă çыруçемсĕр пуçне, çĕнĕ кинофильмăн лентисем нумай. Халĕ вăл фронт çывăхĕнчи колхоза çитсе кĕрет те, сарай умне аппарат лартса, колхозăлă ялăн çыннисене çĕнĕ картина кăтартма пуçлать...

...Акă экран çинче Великобритани пĕтĕм тĕнчипе чи вăйлă флот пулса тăракан тинĕс-çар флочĕ тухать. Тинĕс çинче ишекен каравансене çĕнĕ техникăпа хĕçпăшаллантарнă, вĕсем Великобритани çĕршывне океан çинче сыхласа тăраççĕ. Тинĕс çинчи пысăк аэродромран Англи самолечĕсем сывлăшри çапăçусене тухса каяççĕ. Вăйлăн хĕçпăшалланнă англичансене фашистла Германи йыткĕтĕвĕсем ниепле те пырса тапăнма пултараймаççĕ. США-ран Англие каякан çар хатĕрĕсем тиенĕ каравансем çине темиçе хутчен атака туни ăнăççăр вĕçленет. Паттăр моряксем хăйсен юратнă çĕршывне сыхлама пĕтĕм халăхпа пĕрле тăнине кунта витĕмлĕн кăтартса панă. Тăшмана йĕрлекен моряксем çĕнтерӳ тунипе каялла тавăнаççĕ. Гитлерла çаран подводнăй лодкисене çĕмĕрсе тăкнă. Англи çине тăшман сывлăшран та, шыв çинчен те тапăнса пăхать. Анчах çĕнтерӳ—моряксемпе летчиксем енче. Мухтавлă моряксене премьер-министр Черчилль кĕтсе илет.

Çак картина ирĕклĕхе юратакан халăхсем тăшмана çĕнтерме пĕр шухăшлăн пулса ура çине тăнине кăтартса парать.

...Фронт çывăхĕнчи колхозлă ялăн тинĕс пек ешĕрсе выртакан уйăрĕнче хĕрӳллĕ ĕç пырать. Анса пулнă тырпул колхозниксемпе колхозницăсене савăнтарать, ăна хăвăртрах пуçтарса кĕртме илĕртет. Çав вăхăтра мирлĕн ĕçлекен колхозницăсем çывăхне тăшман самолечĕсем десант антарса хăвараççĕ. Уйăра ĕçлекен хĕрарăмсемпе ачасене фашистсем пĕр ушкăна пухса хăйсен влаçĕпе ĕçлеттерме пуçласшăн. Анчах пухăнса тăнă ушкăнран пĕри те ĕçе каяканни çук. Урса кайнă офицер çавăнтах колхозницăсене, ачасене пере-пере вĕлерет. Чĕре вĕри юнпа тулса ларать...

Совет танкĕсен колонни тăшман тылне кайни курăнать. Пĕр броневикăн бензин юхса тухнă. Колхозри трактористка, фашистла десантсем йышăнса илнĕ яла çитсе, вилĕмрен хăрамасăр, фашистсен сăмси умĕнченех совет танкĕ валли бензин илсе тухать. Тата темиçе минутăран фашистла варварсен самолетне антарса лартмалли площадка тутăракан çĕре совет танкĕ пырса çитет. Хăраса ӳкнĕ тăшмансем тарса хăтăлаймаççĕ. Танк вĕсене çĕр çумне лапчăтса лартать. «Патриотка» фильмăн содержанийĕ çакăн пек.

Ку фильмра совет çыннисен патриотизмĕ, вĕсем тăван çĕршыва тăшмансенчен хӳтлеме хатĕр тăни, нумай миллионлă халăх Хĕрлĕ Çара юратса унпа таччăн çыхăнса тăни ӳссăн курăнать. Трактористка рольне Зоя Федорова вылять.

«Приказ выполнен» новеллăри тĕп герой—красноармеец Баков командир приказне пурнăçланă чухне тĕрлĕ йывăрлăхсемпе тĕлпулать. Çав йывăрлăхсемпе чăрмавсене çĕнтерсе илме хăюлăхпа тавçăрулăх кирлĕ. Баков красноармеец командир шанса тăнине тӳрре кăларать. Вăл тăшмансен пысăк ушкăнĕ тапăнса пынине чарса лартать. Çак вăхăтпа усă курса вăл машинăна юсаса çитерет те хăйсен чаçне патронсем илсе каять. Чăтăмлă боецсем Бакова хавасланса кĕтсе илеççĕ. Халĕ ĕнтĕ фашистсем çине атака тума та патронсем çителĕклех. Вилĕмрен хăрамасăр геройла çапăçаканскерсем, суранланнă командир ертсе пынипе, тăшмана аркатса тăкаççĕ. Фашистсем тем тĕрлĕ чееленсен те, пирĕн Хĕрлĕ Çар вăйлăн пырса çапнине чăтаймаççĕ. Вĕсен ултавлă ĕçсем пĕтсе ларать.

Çак картина кашни çынна хăюллă та тӳсĕмлĕ пулма вĕрентет. Картинăра вăрçă обстановкине, командирсемпе боецсем хушшинчи çирĕп туслăха кăтартса панă.

Шупашкарта кăтартма пуçланă «Çĕнтерӳ пирĕн алăра пулать!» киносборнике ĕççыннисем юратсах пăхĕç тесе шанма пулать.

Н. ЮМАНГАЙ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 5122. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 490. Ф. б. 58 84 п. л.